ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрĕ 26 ШĂМАТКУН № 251 (9160)

Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Совет сучĕ халăх ыйтнине пурнăçларĕ (1 стр.).
Хамăр республикăра (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: КПСС Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ; М. Краснов.—Механизаторсен производствăлла активлăхне ÿстерер (2 стр.).
Н. Цветков.—Ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсаççĕ (2 стр.).
ЯЛХУÇАЛĂХ СПЕЦИАЛИСЧĔСЕН ТРИБУНИ. Л. П. Павлова.—Çамрăк специалистсем çине тĕрĕс пăхмалла (2 стр.).
Цикл графикĕ—ĕç тухăçлăхне ÿстермелли паха май. Çĕмĕрле вăрманпромхозĕн опычĕ (3 стр.).
Румынири халăх советĕсен суйлавĕн результачĕсем (4 стр.).
Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетессине хирĕç (4 стр.).
Франци хресченсем правительство политикине хирĕç протестлаççĕ (4 стр.).
Корейăри Хĕрлĕ Хĕрес Обществин комиссийĕн протоколĕ (4 стр.).
Э. Нирк.—Эстони литератури никĕсне хываканĕ Ф. Р. Крейцвальд çуралнăранпа 150 çул тултарнă май (4 стр.).

Суд приговорĕ — халăх приговорĕ

Сутăнчăк тата шпион Берия тата вăл тунă сутăнчăкла ушкăн участникĕсем — Меркулов, Деканозов, Кобулов, Гоглидзе, Мешик тата Влодзимирский ĕçĕ пирки СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ йышăннă приговора пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисем чун-чĕререн ырласа кĕтсе илчĕç. Суд каварçăсене чи пысăк уголовнăй наказани парасси—персе пăрахасси çинчен йышăннă решени тата çак приговора пурнăçа кĕртни совет çыннисем ыйтнине туни пулчĕ.

— Совет сучĕн приговорĕ — тенĕ Киеври «Ленинская кузница» заводри рабочи Яременко юлташ,—халăх ыйтнине пурнăçлани пулчĕ. Мĕнпур ĕçсыннисем, СССР Прокуратури пĕлтернине сÿтсе явса, сутăнчăксен шайккине ним хĕрхенмесĕр тĕп тума, рабочисемпе хресченсен союзне хавшатма, влаçа хăйсен аллине тытса илме, рабочисемпе хресченсен советла стройне пĕтерме тата буржуази пуç пулса тăрассине тепĕр хут тума хăтланнă ылханлă каварçăсенчен Совет çĕрне тасатма ыйтрĕç. Халăх ирĕкне пурнăçа кĕртнĕ!

— Колхоз хресченĕсем пурте,—тенĕ Ярославль облаçĕнчи Некрасовски районĕнчи «Красный коллективист» колхоз председателĕ Социализмла Ĕç Геройĕ Гунина юлташ,—çав тĕрĕс приговора пĕр кăмăлтан ырласа кĕтсе илчĕç. Ирсĕр тăшмансем, тем тĕрлĕ пытанса хăтлансан та, пирĕн государствăн вăй-хăватне хавшатма, колхозлă строя—пирĕн ырă пурнăçăн никĕсне—ниçсан та хавшатма пултараймĕç. Тăшмансен мĕнпур усал ĕçĕсене пĕтерсе лартĕç, тăшмансене хăйсене тĕп тăвĕç. Колхоз хресченĕсем тăван Коммунистсен партийĕ тавра тата та çывăрах пĕтĕçсе, ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн пыракан кĕрешÿре вăя темиçе хут ÿстерсе ĕçлĕç.

Ку вăл мĕнпур рабочисен, колхозниксен, интеллигенци — пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисен сасси. Ку вăл Тăван çĕршыва сутакансене тытса тăрă шыв çине кăларса тĕп тунине ĕçсыннисем пĕр шухăш-кăмăллă пулса ырланине палăртса тăрать.

Берияна тата унпа пĕр каварлă пулнисен ĕçĕ совет çыннисене каллех çакăн çинчен аса илтерет: ют çĕршывсенчи реакциллĕ империалистла вăйсем пирĕн Тăван çĕршыва хирĕç çине тăрса сăтăрла ĕç туса пыма чарăнмаççĕ. Империалистла вăйсем «сивĕ вăрçă» текенскерне сарса пыраççĕ, хаçат-журналсенче тата радио тăрăх СССР Союзне хирĕç вĕçĕмсĕр элеклĕ кампанисем туса пыраççĕ, пирĕн çĕршыва шпионсемпе диверсантсем яма хăтланаççĕ, çавăрла ĕç валли çĕршер миллион доллар уйăраççĕ.

Империализмăн реакциллĕ ушкăнĕсем Совет Союзĕнче хăйсен государствисен разведка органĕсен урлă пысăкла кайнă ирсĕр çыннисене тупма тăрăшаççĕ. Вĕсем çав çыннисемпе хăйсен сăтăрла ĕçĕсенче усă курасшăн. Империалистла ушкăнсем Совет Союзĕнче урăх никама та шанма пултараймаççĕ: эксплуататорла классене пирĕн патра тахçанах тĕп тунă, совет обществин моралпе-политикăлла пĕрлĕхĕ çирĕп. Çавăнпа та Берия тата унпа пĕр каварта пулнă сутăнчăксем ют çĕршывсенчи реакциллĕ ушкăнсемшĕн кирлĕ çынсем пулнă.

Малтанхи следстви тата суд следствийĕнче палăртнă тăрăх, ют çĕршывсенчи реакционерсем Берияна «хăйсен çынни», шанчăклă агентпа лазутчик тесе шутлама сăлтавсем çителĕклĕ пулнă.

1919 çултах Бакура Берия муссаватистла правительствăн разведкине вăрттăн агент пулса ĕçлеме кĕнĕ. Çав правительство Англи разведка органĕсен хушнă чи ирсĕр те юнлă ĕçсене туса пынă. 1920 çулта, Грузире пулнă чухне, Берия каллех сутăнчăкла ĕç тунă, меньшевиксен охранкине, Англи разведкин филиалĕ пулса тăнăскерне, вăрттăн сыхлану тытнă.

Ытти çулсенче, хăйне арестличчен, Берия ют çĕршывсен разведкисемпе тытнă çыхăнусене çирĕплетсе, сарса пынă. Хăйĕн тăшманла ĕçĕсене пытарса, вăл каварçăсен сутăнчăкла ушкăнне тунă, çав ушкăна Совет государствине хирĕç питех те пысăк преступленисем тунă, Берияна нумай çулсем хушши пĕрле ĕçленĕ çынсем кĕнĕ. Каварçăсем хăйсем ĕçленĕ Шалти ĕçсен министерствин органĕсене Коммунистсен партийĕне СССР правительствинчен аслăраха хурас, çав органсемпе партипе правительствăна хирĕç, халăха хирĕç, влаçа тытса илес, рабочисемпе хресченсен советла стройне пĕтерес, пирĕн çĕршыва капитализма каялла таврас тата буржуази пуç пулса тăрассине тепĕр хут тăвас [illegible] ирсĕр та преступникла тĕллев лартнă.

Хăйсен преступникла ĕçĕсене пытарас тесе, каварçăсем, [illegible] [illegible] совет работникĕсен [illegible]

[illegible] нă, çакна вĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет влаçне чун-чĕререн парăннă çынсене вĕлерсе пĕтерес тĕллевпе тунă.

И. В. Сталин вилнĕ хыççăн, пĕтĕм тĕнчери реакци Совет государствине хавшатас тĕллевпе хăйĕн ĕçĕсене вăйлатнă вăхăтра вĕсен агенчĕ тата сутăнчăк Берия та васкаса ĕçлеме пуçланă. Влаçа хăйĕн аллине тытса илме хатĕрленсе, вăл Шалти ĕçсен министерствин центральнăй аппаратĕнче тата унăн вырăнти органĕсенче ертсе пыракан вырăнсене хăйĕн ушкăнне хутшăннă çынсене васкаса уйăрса лартма тытăннă, унти тÿрĕ кăмăллă работниксене — каварçăсен преступникла распоряженийĕсене пурнăçлама килĕшмен çынсене—ним хĕрхенмесĕр айăпланă, вĕсене хытă хĕсĕрленĕ.

Берияна сутăнчăкла вăрттăн планĕнче рабочисемпе хресченсен союзне хавшатас, колхоз стройне хавсăрлатас, çĕршывра апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен йывăрлăхсем тăвас тесе, саботаж тăвасси те, партипе правительство ялхуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене чăрмантарасси те пулнă. Союзлă республикăсенче буржуазла-националистла элементсен юлашкисене вăйлатас, ССР Союзĕнчи халăхсем хушшинче хирĕçÿ кăларас, чи малтанах, ССР Союзĕнчи халăхсемпе аслă вырăс халăхĕ хушшинчи туслăха хавшатас тĕллевпе Берия преступникла ĕçсем нумай тунă.

Çакăн пек провокациллĕ ĕçсем туса, Берия ют çĕршывсенчи хуçисем—империалистсен реакциллĕ ушкăнĕсем хăйсен тахçанхи агенчĕн ĕçĕсене «тăкĕç», унăн Совет Союзне хирĕç тунă каварне пулăшĕç, тесе шанса тănă. Реакциллĕ ушкăнсем-чăннипех те хăйсен тарçине тем тĕрлĕ майпа та пулăшнă, Совет Союзне хирĕç кĕрешме тунă плана пурнăçлама хушнă. Анчах тăшмансем Совет государствине вăйсăрлатас тесе шанса пурăннă кăлăхах пулчĕ. Империалистла вăйсем хăйсен ĕçĕсене вăйлатнине хирĕç тăрса пирĕн халăх Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тата çывăрах пĕтĕçрĕ, парти туса хатĕрленĕ политикăна пурнăçлама тытăнчĕ. Хăйĕн сăтăрла ĕçне вăйлатса, Берия тытăнчĕ. Парти Центральнăй Комитечĕпе СССР правительстви çав сутăнчăка тăрă шыв çине кăларчĕç, Берия тунă каварçăсен ушкăнне палăртса сиенсĕрлетрĕç. Питех те чее майпа пытанса пурăннă сутăнчăкпа шпионăн вăрттăн контрреволюциллĕ каварĕ пирĕн партипе правительствăн пысăк сыхлăхĕ çине сапăнса арканчĕ. Партипе правительство халăх интересĕсене сыхă хураллаççĕ.

Берияпа унăн шайккин ĕçĕ вĕçленнĕ. Совет халăхне хирĕç тунă каварçăсен ушкăнĕсене илсе пăхсан, Берияна каварлă ушкăнĕ чи ирсĕр, чи усал ушкăн пулса тăрать. Берияна каварлă ушкăнне хутшăннисене чи пысăк наказани панă: персе пăрахмалла туса приговор йышăннă, Приговора пурнăçа кĕртнĕ. Берияна ылханлă ятне тата унпа каварлă пулнисен ячĕсене халăх ылханса питлет. Берия ĕçĕ мĕнпур участоксенче тата кирек мĕнле хуçалăх та политикăлла сыхлăха ÿстерсе пыма кирли çинчен тепĕр хут аса илтерет. Парти организацийĕсем совет аппаратне, вăл шутра Шалти ĕçсен министерствин органĕсен ĕçне те, куллен тĕрĕслесе тămалла, совет законĕсене мĕнле пурнăçласа пынине çирĕп тĕрĕслесе тămалла.

Совет çыннисен политикăлла сыхлăхне ÿстерсе пымалла. Ку вăл Совет государствине малалла тĕреклетсе пымаллине, унăн вăй-хăватне ÿстермеллине пĕлтерет. Берияна каварлă ушкăнне тăрă шыв çине кăларнине мĕнпур совет çыннисем шăпах çавăн пек хаклаççĕ ĕнтĕ. Капитализмла çĕршывсенчи тÿрĕ кăмăллă çынсем те ку ĕçе çавăн пек хак параççĕ. Индири «Нейшнл геральд» хаçат нумаях пулмасть питех те тĕрĕс çапла çырнă: Берияна тата унпа каварлă пулнисене тăрă шыв çине кăларни çинчен пĕлтерни «Совет влаçĕ тĕреклĕ пулни çинчен тата вăл хăйĕн вăйĕсене шанса тăни çинчен калать».

Хăйĕн сулĕ çинчи сĕлене таптаса лапчăтса тата анкла илсе ывăтса, совет халăхĕ коммунизм строительствин мухтавлă çулĕпе шанчăклăн малалла утать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви рабочисен, колхозниксен ĕçĕпе творчествине мирлĕ экономикăна пур майсемпе те аталантарас, социализмла ялхуçалăхне вăйлатас тата халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерес, хуларан тата ялти мĕнпур ĕçсыннисен пурнăçне пĕрмаях лайăхлатас ыйтусене çĕре хурсĕ. Çак питех те пысăк задачăсем пирĕн халăхăн интересĕсене, пĕтĕм тĕнчере мира сыхласа хăварас тата çирĕплетес задачăсене килĕшсе тăраççĕ. Совет çыннисем, Коммунистсен партийĕпе унăн Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе, çак задачăсене йăлăх пурнăçа кĕртессипе хăйсен вăй-хăвне хураççĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн декабрĕн 25-мĕшĕнчи ундаловĕ).

Совет сучĕ халăх ыйтнине пурнăçларĕ

Сыхăлăха ÿстерер

Виçĕмкун Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен митингĕ пулса иртрĕ. Митинга уçса, партбюро секретарĕ И. Бугаев юлташ сăмах каларĕ.

— СССР Прокуратури халăх тăшманĕсен Берияпа унпа пĕр каварлă пулнисен ĕçне следстви туса пĕтерсен совет халăхĕ Тăван çĕршыва сутнă ирсĕр тăшмансене тивĕçлипе айăплама ыйтрĕ.

СССР Верховнăй Сучĕн Суд Присутствийĕ Берияна тата унпа пĕр каварлă пулнисен ĕçне пăхса тухса, вĕсене персе пăрахмалла турĕ. Декабрĕн 23-мĕшĕнче приговора пурнăçа кĕртнĕ.

Трибуна умне рабочисем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ, ют çĕршыв капиталне сутăннă ирсĕр тăшмансене çав тери тарăхса питлеççĕ, Тăван çĕршыв вăй-хăватне ÿстерессишĕн тата ытларах вăй хурса ĕçлеме, сыхăлăха ÿстерме чĕнеççĕ.

Трибуна умĕнче — заводри главнăй конструктор Осадченко юлташ.

— Берияпа унăн ушкăнĕн ирсĕр ĕçĕсене вăхăтра пĕтерсе лартни пире, совет çыннисене, пурне те савăнтарать. Çав ирсĕр тăшмансем аслă Совет Союзĕнчи халăхсен тăванла туслăхне хавшатма шут тытнă. Пирĕн туслăха, рабочи класпа колхоз хресченĕсен союзне никам та хавшатма пултараймĕ. Совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе, коммунизм çулĕпе анаçлăн малалла пырать. Аслă совет халăхне çак историллĕ çул çинче чăрмантарма пултаракан вăй тĕнчере çук.

— Верховнăй Суд Берияпа ун майлă пулнă тăшмансем пирки тивĕçлĕ приговор йышăнчĕ. Çав приговор совет халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртрĕ. Тăшмансен каварне совет халăхĕ ялан аркатса пынă, малашне те çапла пулĕ. Совет çыннисем пĕрлĕхлĕ çемьере пурнăççĕ. Эпир Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçĕпĕр.

— Совет халăхĕн интересĕсем пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен интересĕсемпе тачă пĕтĕçсе тăраççĕ. Çавăнпа та Берияпа унăн ирсĕр ушкăнĕ пирки йышăннă приговора пĕтĕм тĕнчери малта пыракан этемлĕх ырласа кĕтсе илчĕ,—терĕ 2-мĕш сборочнăй цехри старши мастер Захаров юлташ.

Митингра тухса калакан юлташсем рабочисене Тăван çĕршыва тĕреклетессишĕн ырми-канми ĕçлеме чĕнчĕç. Пурте пĕр шухăшлă пулса йышăннă решенире завод коллективĕ производство программине пурнăçлас тĕлĕшпе çине тăрса кĕрешме пулчĕ.

Тата хастарлăрах ĕçлеме пулаççĕ

Декабрĕн 24-мĕшĕнче Шупашкарти пир-авăр комбиначĕнчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен пухăвĕ пулчĕ. Пухура КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Никитин юлташ СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ йышăннă приговора вуласа пачĕ. Унтан вăл çапла каларĕ:

— Специальнăй Суд Присутствийĕ халăхăн ылханлă тăшманĕсене — Берияна тата унпа пĕр каварлă пулнисене çирĕп наказани пачĕ: вĕсене персе вĕлермелле турĕ. Приговора пурнăçа кĕртнĕ.

Митингра пулнисем çак хыпара алă çупса ырларĕç.

Осипов монтажник сăмах илет.

— Совет халăхĕ-телейлĕ те савăнăçлă пурăнать. Тăшмансем пирĕн ырă пурнăçа пĕтересшĕн пулчĕç. Ылханлă Берия тата ытти каварçăсем социализм çĕршывне пĕтерме тĕллев лартнă, пирĕн телейĕ пурнăçа пĕтересшĕн, капитализм стройне тепĕр хут тăвасшăн пулнă. Анчах вĕсен ĕç тухмарĕ. Тăшмансем тĕлĕшпе йышăннă приговор пĕтĕм халăхăн приговорĕ пулчĕ. Эпĕ вăл приговора чун-чĕререн ырлатăп.

Трибуна умĕнче — çамрăк работница Петрова юлташ.

— Эпĕ совет саманинче ÿссе çитĕннĕ. Эпир хамăршăн, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, совет çыннисен телейĕшĕн ĕçлетпĕр. Партипе правительство пирĕшĕн, рабочисемшĕн, куллен тăрăшаççĕ. Эпир хастарлă ĕçлени, çирĕп утăмсемпе коммунизм патне утни тăшмансен кăмăлне каймарĕ. Вĕсем влаçа хăйсен аллине çавăрса илсе пире чурасем туса хурасшăн пулнă. Ирсĕр тăшмансен тискер ĕçĕсене вăхăтра чарса лартрĕç. Совет законĕ сĕлен-калтасен йăвине тĕп турĕ. Эпир çавăнтан чунтан савăнатпăр.

— Комбинат коллективĕ сутăнчăксене çирĕп наказани пама ыйтса резолюци йышăннăччĕ. Паян акă, вĕсене тивĕçлипе айăплани çинчен пĕлтĕмĕр. Тăшмансем тем пек тăрăшсан та Совет çĕршывне хавшатма пултараймарĕç, мĕншĕн тесен вĕсем—пĕчченшерĕн, эпир вара—çĕршер миллионлă. Тата хастарлăрах ĕçлеме, чи лайăх продукци кăна туса кăларма сăмах паратăп,—терĕ работница Сисникина юлташ.

Пир-авăр тĕртекен фабрикăра мастер помощникĕ Борисов юлташ та ылханлă сутăнчăксене тивĕçлĕ наказани панăшăн хăй кăмăллă пулнине палăртса каларĕ.

Пухура пулнисем пĕр кăмăллă пулса резолюци йышăнчĕç. Комбинат коллективĕ тăшмансем тĕлĕшпе йышăннă приговора хĕрÿллĕн ырларĕ тата хастарлăрах ĕçлеме, продукци туса кăларассине ÿстерме, унăн паха лăхне лайăхлатма пулчĕ.

Халăх ирĕкне палăртакан приговор

КУСЛАВККА, декабрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховнăй Сучĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ Берияна тата унпа пĕр каварлисен ĕçне пăхса тухса, вĕсене персе вĕлермелле туни тата приговора пурнăçа кĕртни çинчен калакан хыпар районти предприятисемпе учрежденисенче хăвăрт сарăлчĕ. Рабочисемпе служащисем тата колхозниксем халăхăн Тăван çĕршывăн тăшманĕсене совет сучĕ тивĕçлĕ наказани панине чĕререн ырлаççĕ.

Сÿртсем тăвакан заводри паллă стахановец В. Никифоров юлташ завод коллективĕн шухăш-кăмăлне палăртса çапла каларĕ:

— Берия тата унпа пĕр каварлисем, ют çĕршывсенчи империалистсене сутăнса, пирĕн çĕршывра рабочисемпе хресченсен союзне пĕтересшĕн пулнă. Çак ирсĕр тĕллеве пурнăçа кĕртесшĕн пулса вĕсем нимĕнле хура ĕç укĕнче те чарăнса тăман: партипе правительство туса пыракан питех те кирлĕ ĕçсене пурнăçлама чăрмантарнă, сăтăрлă ĕçсем тунă. Тÿрĕ кăмăллă çынсене вĕлернĕ.

Тăшмансен вăрă-хуракла ĕçне тăрă шыв çине кăларнă. Совет сучĕ вĕсене тивĕçлĕ наказани пачĕ. Эпир, рабочисем, совет сучĕн халăх ирĕкне палăртакан приговора ырлатпăр.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçнĕ совет çыннисем хăйсен телейлĕ пурнăçне турта илме хăтланакан тăшмана ялан аркатса тăкĕç.

Завод коллективĕ çулталăкри плана срокчен тултарасшăн, плантан ирттерсе продукци нумай туса кăларасшăн тăрăшать.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

Тивĕçлĕ наказани

Шупашкарти акета тĕртекен фабрика коллективĕн пухăвĕнче чи малтисен фабрикăри паллă стахановка-ткачиха Малчихина юлташ сăмах илчĕ.

— Тăван çĕршыва сутакан Берияпа тата унпа пĕр каварлисем капитализма каялла таврас тата пирĕн çĕршыва буржуазин пуçĕ пулса тăмалла тăвас тĕллев лартнă,—терĕ вăл.—Вĕсем ют çĕршывсенчи империализмăн агенчĕсем пулса тăнă. Ирсĕр тăшмансен шалкă тунă. Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тăшмансене вăхăтра тупса тăрă шыв çине кăларчĕç. Тивĕçе кун кăларнă эпир хамăр пахăтапа ячĕпе çав тăшмансене хытă айăплама ыйтса резолюци йышăнатпăр. Совет сучĕ вăл—халăх сучĕ. Тăшмансене халăх сучĕ турĕ, халăх ыйтнă пек айăпларĕ — [illegible] приговор йышăнчĕ. Приговора пурнăçа кĕртнĕ.

Пухура пулнисем приговора алă çупса ырларĕç.

— Халăх тăшманĕсене [illegible] — [illegible]

Мастер [illegible] [illegible] Берияпа унпа пĕр [illegible] [illegible] халăх [illegible] çинчен [illegible] каларĕ.

— Тăшмансем [illegible] [illegible] ретсене, пирĕн социализмла çĕршывра халăхсен [illegible] хавшатасшăн пулнă. [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] пулмалла, революциллĕ сыхлăха куллен ÿстерсе пымалла. Капитализма çĕршывсем Совет Союзне [illegible] хирĕç тăшманла [illegible] тума тăрăшнине [illegible] манмалла мар. Парти Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тавра тата та тачăрах пĕтĕçер. Тăван çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетессишĕн ырми-канми ĕçлер.

Пухура бригадир [illegible] тата [illegible] юлташсем тухса калаçрĕç. Вĕсем СССР Верховнăй Совечĕн Специальнăй Суд Присутствийĕн приговорне пĕтĕм кăмăлтан ырлани çинчен каларĕç.

Пухура пулнисем Берияпа унпа пĕр каварлă тăшмансем пирки йышăннă приговора ырласа резолюци йышăнчĕç.

Хамăр республикăра

Çĕмĕрлери предприятисенче

Кирпĕч завочĕ, арман, Вырăнти тата топливо промышленность министерствине пăхăнса тăракан вăрманпромхоз çулталăкри плана тăхăр уйăхра тултарнă. Сăкăр комбиначĕ, Ширшов ячĕпе тăракан промартель, райпромкомбинатсем те çулталăкра продукци туса кăлармалли плана тултарнă. Асăннă предприятисем плантан ирттерсе продукци туса кăлараççĕ.

Хулари магазинсенче ача сĕтел-пуканĕ, тимĕр кĕреçе, витре, тумтир çаккисемпе этажеркăсем сутаççĕ. Вĕсене йывăç япаласем тăвакан завод туса кăларать. Завод перекетленĕ чĕртавартан 350 парник рами туса кăларма пулнă. Вăл «Сельхозснабăн» Çĕмĕрлери складне 200 рама панă, 150 рама Актюбинск хулине яма хатĕрленĕ. Халĕ кунта пахча çимĕç валчисем ÿстермелли кубиксем тума станок хатĕрлеççĕ. Сурма автоматлă вунă клеткăллă станока пайн-ирăн туса пĕтереççĕ.

Çĕнĕ ĕçсене коммунистсем пуçарса яраççĕ. Парник рамисем тума 3-мĕш цехри коммунистсем Т. Ерошин, С. Старухин, Н. Пугачев юлташсем сĕнчĕç. Производство юлашкичен куллен кирлĕ япаласем туса кăларассине 4-мĕш цехри коммунистсем Н. Тюрин, А. Суслимов, А. Таттур юлташсем пуçарчĕç.

П. АНТОНОВ.

Иртнĕ кăçнерникун Шупашкарта Карл Маркс урамĕнче универсальнăй магазина ĕçлеме пуçларĕ. Кунта çăкăр тумтирсем, пусма таварсем, савăт-сапа, хуçалăхра кирлĕ ытти япаласем нумай сутаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: хуçалăхра кирлĕ япаласем сутакан уйăрăм.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Производство çурчĕсене пысăклатмасăрах продукци туса кăларассине ÿстерер

УЛĂТĂР, декабрĕн 25-мĕшĕ, (Телефонпа). Атă-пушмак фабрики продукци туса кăлармалли 1953 çулхи плана срокчен тултарчĕ, çулталăк вĕçлениччен заданирен ирттерсе 10 пин мăшăр атă-пушмак туса кăларать. Продукци пахалăхĕ лайăхланчĕ. Задани тăрăх, пĕрремĕш сорт продукци 80 процент пулмалла, фабрика 85 процент парать. Ĕç тухăçлăхне ÿстерсеххи 11 уйăхри плана 134,7 процент тултарчĕ. А. Сазанов, И. Кожаев, З. Мĕтушкина, М. Кармастина юлташсем икĕ çулхи ĕç нормине тултарчĕ.

Коллектив материалсем, электроэнерги перекетлессишĕн кĕрешет. Фабрика перекетленĕ материалсенчен плантан ирттерсе 10 пин мăшăр атă-пушмак туса кăларать. Ударниксем М. Хударова, Р. Кудякова закройщицăсем пахалăха кĕтартнине палăртас пулать. Вĕсем 33 пин тенкĕлĕх ытла материал перекетленĕ.

РСФСР Çутă кирлĕ промышленность таварĕсен министерстви фабрикăна пысăк задани панă: 1954 çулта, [illegible] плантан ирттерсе 30 пин мăшăр атă-пушмак, урăхла каласан, 22,4 процент нумайрах туса кăлармалла. [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] [illegible]

Коллективăн творчестволла [illegible] [illegible] [illegible] фабрика плантан ирттерсе 300—350 мăшăр атă-пушмак туса кăларать.

Колхозри радиоузел

ПЕРВОМАЙСКИ. Карл Маркс ячĕпе [illegible] [illegible] [illegible] [illegible] [illegible]

[illegible] радио [illegible] [illegible] [illegible]

И. НИКОЛАЕВ.

МТС колхоза пулăшать

ШАХАСАН. [illegible] [illegible] [illegible] машинăпа-трактор станцийĕн 11-мĕш трактор бригади [illegible] [illegible] [illegible]

[illegible] [illegible] [illegible]

И. ИВАНОВ.

Цикл графикĕ—ĕç тухăçлăхне ÿстермелли паха май

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕн опычĕ

* * *

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Вăрман хатĕрлекен промышленность ĕçне пынине пĕтересси çинчен» йышăннă постановленире çапла каланă: «Ĕç тухăçлăхне ÿстерес, вăрман хатĕрленĕ çĕрте механизмсемпе усă курассине лайăхлатас, производство процесĕсене пурне те татти-сыпписĕр туса пырас тĕллевпе СССР Вăрманпа кут промышленность министерствине вăрман хатĕрлес ĕçе цикл меслечĕпе туса пырассине организацилеме хушас».

Çак кăтартăва пурнăçласа, Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ цикл меслечĕпе ĕçлеме тытăнчĕ. Çакă вăл ĕç тухăçлăхне ÿстерме, механизмсемпе туллинрех усă курма май пачĕ. Вăрманпромхоз çулталăкри плана срокчен тултарчĕ, халĕ планран ирттерсе йывăç хатĕрлет.

Çак страницăра эпир цикл меслечĕпе ĕçлекен опычĕпе паллаштаратпăр.

* * *

Машинăна хисеплени кирлĕ

ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн мана кивĕ тракторпа ĕçлеме хушрĕç. Унтанпа икĕ çул иртрĕ. Паллах, кивĕ трактор час-часах çĕмĕрлет. Ĕçленĕ вăхăтра

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Электропăчкă моторисчĕ Я. Т. Тимофеев. Вăл кулленхи нормăна 120—139 процент тултарать.

ăна хăвăннах юсас пулать. Çапла, малтанхи кунсенчех кивĕ тракторпа ĕçлени, унăн пайĕсене час-час юсани вĕреннĕ чухне илнĕ теорие практикăпа таччăн çыхăнтарма пулăшрĕ, машинăна тата лайăхрах пĕлсе çитме май пачĕ.

Нумаях пулмасть ман трактора юсама вăрманпромхозри мастерскоя ăсатрĕç. Вăл вăхăтра ĕçлеме мана 17-мĕш номерлĕ трактор пачĕç. Ку трактор хисепре пулман. Вăл час-часах çĕмĕрĕлсе ларнипе А. Макаров тракторист пăрахса кайрĕ. Çур кун хушши юсанă хыççăн трактора хута ятăм. Унччен нормăна тултараймасан А. Макаров тракторĕпе кунне 60-шар кубометр турттарма тытăнтăм. Декабрĕн 8-мĕшĕнче малтанах ĕçленĕ трактора юсаса пĕтерчĕç. Эпĕ 17-мĕш номерлĕ тракторпа ăнăçлă ĕçленĕ май, эпĕ унччен ĕçленĕ 22-мĕш номерлĕ трактора А. Юданова В. Пивоваров трактористсене пачĕç. А. Юданов хăйĕн помощникĕпе декабрĕн 8-мĕшĕнче кун каçа аппаланса та трактора хускатаймаын. В. Пивоваров тракторист каçхи смена тăрăшшипех усăсăр тăрмашнă. Вĕсем мана двигатель хута каймасть тесе пĕлтерчĕç. Декабрĕн 9-мĕшĕнче ирхине ырсан, мастертан ирĕк ыйтса, çĕмĕрĕлнĕ трактор патне пытăм. Ир пуçласа кăнтăрлахи апатчен вăхăт трактора хатĕрлесе иртсе кайрĕ. Кăнтăрла иртсен, трактор пат-пат! туса çирĕппĕн сасă пачĕ, унтан хускалса кайрĕ. Вăл кун смена пĕтиччен 45 кубометр йывăç илсе тухрăм. Çак тĕслĕх акă мĕн çинчен калать: апир, трактористсем, машинăна хакламастпăр-ха.

Цикл меслечĕпе ĕçлеме тытăннă май, трактора çĕмĕрĕлесси патне илсе пыракан сăлтавсем те сахалланчĕç. Унччен эпир пурте пĕр лаптăкран турттараттăмăр. Пĕр-пĕринчен ăмăртса (пĕр-пĕринпе ăмăртса мар!) шалтан-шала кĕрсе шултрарах йывăçсем кăкарма тăрăшаттăмăр. Вăкăрахи çине çавăрăнса та пăхмастăмăр, таптаса кăна иртсе каяттăмăр. 4—4,5 кубометр кăкарнă хыççăн, трактора каллех йывăç çийĕн сиктерсе пыраттăмăр. Мĕн пек йывăрлăх тивет тулли трактора! Ăçтан тÿстĕр çĕмĕрĕлмесĕр? Халĕ апла мар. Кашни тракторист хăйне çирĕплетсе панă участокран кăна турттарать.

Халĕ мотористсем йывăççене пĕр еннелле ÿкереççĕ. Ку вара пире те çăмăллăх кÿрет: урăх-пирлĕ выртакан йывăççене, ĕлĕкхи пек, пĕрерĕн туртса кăларса суйласси çук. Эпĕ пушатса тавăрннă çĕре А. Улянов чокеровщик запасри 12 чокерпа йывăççене кăкарса хатĕрлет. Тракторист помощникĕ Н. Шкарин трос сергине туртса кăларса, чокер ункисене трос çине хăварт тирсе тухать. Пушă чокерсене каллех А. Улякова парса хăваратпăр, Н. Шкарин манпа пĕрле тиемелли площадкăна йывăç пушатма ларса пырать.

Пирĕн кашни сменăра 46 кубометр йывăç кăлармалла, апир ку хисепе 55—60 кубометра çитересшĕн тăрăшатпăр.

В. ПИМАШИН, тракторист.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿсет

Мастер участокĕнче йывăç касса çул хĕррине кăларас ĕçе цикл графикĕпе йĕркелени—çĕнĕ меслет. Унччен йывăç касса йăвантаракан мотористпа тата ун хыççăн турат иртекенсене тĕрлĕ сăлтавсем чарса тăратчĕç. Çапла, сăмахран, турат иртекенсем, турат иртсе çунтарма ĕлкĕреймен пирки, электропăчкăпа йывăç касса ÿкерекене чарса тăратчĕç. Трактор турттарса ĕлкĕреймесен те мотористăн тăхтаса тăма тиветчĕ. Çапла вара, мотористсем пултарнă таран ĕçлейместчĕç. Участокри ĕçе цикл меслечĕпе йĕркелени машинăсемпе лайăхрах усă курма май пачĕ.

Кивĕ норма тăрăх, мотористсен 47 кубометр йывăç касса йăвантармаллаччĕ. Хăшпĕр мотористсем, сăмахран, Н. Михайлов, М. Гимранов тата Н. Кошельков юлташсем уйрăм кунсенче 56—67 кубометр касатчĕç. Шутласа пăхнă тăрăх, моторист 100 кубометр ытла касма пултарать. Анчах, хăйăхиччен йывăртарах пулать тесе, мотористя паракан задание 92 кубометр хăвартăмăр. Ку вара, нормăна танлаштарсан, 158 процент пулать. Халĕ касакан вăрман калăпăшĕнчен илсен, 0,40 гектар çинче ÿснĕ 92 кубометр таран йывăç пулать. Çавăнпа кашни мотористах 0,40 гектар вăрман лаптăкĕ уйăрса паратпăр. Çак лаптăк цикл никĕсĕ пулса тăрать.

Манăн участокра 4 электропăчкă. Малтанхи кунсенче кашни электропăчкă патĕнчи рабочисене пĕр бригадăна уйăрттăмăр. Практика çакна кăтартса пачĕ: пĕр бригадăна икĕ моторист уйăрсă парсан ĕç йăнăçлăрах пырать. Çапла вара пĕтĕм участока икĕ потоклă-комплекслă бригадăна уйăрса, бригадирсем пулма чи маттур стахановецсене А. Чепурновпа М. Гимранов юлташсене лартрăмăр. Халĕ кашни бригадăра икĕ моторист, турат иртекенсем 12-шер çын, икĕ трактор, пĕр лебедка. Талăкри цикл вара çакăн пек пулса тухать: тăватă электромоторист 368 кубометр йывăç касаççĕ. Касна йывăç туратнесене уйрăм рабочисем иртсе çунтараççĕ, тăватă тракторпа (икĕ сменăра) чугун çул хĕррине илсе тухаççĕ, икĕ ТЛ-1 лебедка ăна икĕ сменăра тиесе яраççĕ.

Мотористя паракан задани, нормăна танлаштарсан, 158 процент пулать терĕмĕр. Кашни турат иртекенĕн 13 кубометр йывăç туратне иртсе çунтармалла, ку вăл нормăна 160 процент тултарнипе танлашать. Трактористя паракан задани, нормăна танлаштарсан, 112 процент шутланать. Кунтан эпир акă мĕн куратпăр: цикл меслечĕ ĕç кунĕпе лайăхрах усă курма, тухăçлăха ÿстерме май парать.

Малтанхи кунсенче участока паракан заданипе пурнăçлаймастăмăр. Çĕнĕ йĕркепе хăнăхса пыма май, йывăрлăхсем нумай пулчĕç. Анчах тухăçлăх кунтан кун ÿссе пычĕ. Çапла, сăмахран, декабрĕн 25-мĕшĕнче 341 кубометр, 26-мĕшĕнче—364 кубометр йывăç тиесе ятăмăр. Кивĕ майпа ĕçлеес чухне пирĕн участок тăватă сменăра кунне кăна 200 кубометр йывăç тиесе яратчĕ. Çапла шута илсен, халĕ хут [illegible] ытла [illegible] куратпăр. Халăх вăхăтра кашни талăк [illegible]

Çакнашкал ситменлĕхсене пĕтерсен, тухăçлăха тата ÿстерме пулать. Пĕр уйăх каялла кăна пирĕн участокри тĕп производствăра ĕçленĕ кашни комплекера тăракан рабочи пуçне 2,5 кубометр йывăç хатĕрленĕ пулсан, халĕ 3,20 кубометр таран паратпăр. Манăн участокри рабочисем халĕ çĕнĕ йĕркене çине тăрса алла илме тăрăшаççĕ.

С. СИДУГАНОВ, вăлă мастер.

ра 275—300 кубометр йывăç тиесе яратпăр.

Цикл графикĕпе ĕçлесси яланах тикĕс пырать тесе калама çук-ха. Ăнăçлăх комплексла поток бригадисене мĕнле ертсе пынинчен килет. А. Колесов мастер çавна кирлĕ пек ăнланса илмен. Вăл уйрăм звено чарăнса ларни мĕн патне илсе пынине чухласах каймасть, килсе тухакан чăрмава тивĕçлипе хакламасть. Декабрĕн 8-мĕшĕнче каçхи сменăра тăватă трактортан иккĕшĕ кăна ĕçленĕ. Иккĕшне хута яраймаын. Çак тракторсемпех ирхи смена вăхăтĕнче ăнăçлах ĕçлерĕç. Çапла вара, каçхи смена вăхăтĕнче, мастер çине тăман пирки, 92 кубометр йывăç вăрманта юлчĕ. А. Колесов сменинче ытти икĕ тракторпа та нормăсене тултараймаын.

Пирĕнтен килмен чăрмавсем те пулаççĕ. Каçхи смена ăнăçлăхĕ пĕтĕм участока прожекторсемпе çутатниччен сахал мар килет. Хальхи вăхăтра тиемелли площадкăна кăна çутататпăр. Провод çук пирки ытти звеносене çутă парса тăраймастпăр.

Лебедчиксем ăнăçлă ĕçлетчĕр тесен, пушă сцепсем (вăрăм пĕренесене турттарма икĕ платформăна çыхăнтарнине сцеп теççĕ) вăхăтра пырса лартмалла, тиенĕ вагонсене хыççăнах илсе тухмалла. Анчах чугун çул работникĕсем айăпĕпе тиенĕ вагонсене вăхăтра илсе каймаççĕ, лебедчиксем вара, хаклă вăхăта сая яраççĕ. Рабочисене ĕç вырăнне вăхăтра илсе пырассине те хальхинчен лайăхрах йĕркелемелле. Хальхи вăхăтра рабочисем час-часах, сехетшер кая юлса çитеççĕ. Уншăн Сурски чугун çул çинче ĕçлекен работниксем айăплă. Вĕсем пассажирсем илсе çÿрекен вагонсене çирĕп расписанипе çÿретмеççĕ.

Пирĕн опыт

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн директивисенче «Вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн ÿссе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине пĕтермелле», тесе çырса хунă. Çавăн пекех йывăç хатĕрлес ĕçе комплексла механизацилессине малалла аталантарма, производствăна организацилессине тата механизмсемпе усă курассине лайăхлатма, çапла вара йывăç хатĕрленĕ çĕрте ĕç тухăçлăхне ÿстерме палăртнă.

Çак задачăна пурнăçлас тесе, вăрман промышленноçне çĕнĕ машинăсемпе механизмсем парса тăраççĕ. Анчах вăрман промышленноçĕ пур-пĕрех государство планне тултараймасть, халăх хуçалăхне йывăç парса çитерeймест.

Ку пĕтĕмпех вăрман хатĕрлевĕнче ĕçе йĕркелеме пĕлменнинчен килет. Çак ситменлĕхе пĕтерес тесе, 1951 çултанпа Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнче икĕ вăрман пунктне çĕнĕ технологи çине куçарнă.

Вăрман хатĕрлевне комплексла майпа механизациленĕ йывăç касса хатĕрлессине, ăна çул хĕррине илсе тухассине тата вăрмантан турттарса тухассине ÿстерме май пачĕ, рабочисен ĕç тухăçлăхне çĕклерĕ. Йывăç хатĕрлесси çултан çул ÿссе, саралса пырать. 1953 çулта сăмахран, 1952 çулхипе танлаштарсан, пирĕн вăрманпромхоз 25 пин кубометр ытларах йывăç хатĕрленĕ.

Апла пулин те, практика çакна кăтартса пачĕ: вăрманти пуян техникăпа халĕ те çителĕксĕр усă куратпăр-ха. Механизмсене сменăра чылай вăхăт хушши ĕçлеттерейместпĕр.

Мĕнрен килет-ха машинăсем ĕççĕр тăрасси? Ĕçе тĕрĕс мар йĕркеленинчен. Ĕçе организацилесси пуян техникăран юлса пырать.

Пĕтĕм поток ăнăçлăхĕ мĕнпур звеносем тĕрĕс-тĕкел ĕçленинчен килет. Пĕр звено такăнчĕ пулсан, вăл тепĕр звенона тытса тăрать. Çапла, сăмахран, пирĕн вăрманпромхозра тракторсемпе çул хĕррине йывăç илсе тухасси юлса пырать. Илсе тухнă йывăç пулман пирки вагон çине тиекенсем, лебедчиксем ахаль тăраççĕ. Çакă вăл электропăчкăпа йывăç касакансене те тытса тăрать. Каснă йывăç ытлашши пулăнса каяран вĕсем ирĕксĕрех чарăнса тăраççĕ, пултарнă таран ĕçлеймеççĕ.

Малта пыракан вăрманпромхозсем пуян техникăпа туллин усă курма чаракан чăрмавсенчен хăтăлма май пуррине кăтартса пачĕç. Йывăç касса çул хĕррине кăларас ĕçе вĕсем, çĕр кăмрăк промышленноçĕнчи пек, цикл графикĕпе туса пыраççĕ. Çакă вăл рабочисен ĕç тухăçлăхне ÿстерет, машинăсемпе тата механизмсемпе туллин усă курма май парать.

Эпир хамăр вăрманпромхозра ку майпа ĕçлеме С. Сидуганов мастер участокĕнче тытăнтăмăр.

Вăрман хатĕрлевне ку майпа йĕркеленĕ чухне комплексла поток бригади çаплипех юлать. Вĕсен ĕç никĕсĕ вырăнне халĕ ку таранччен пулнă кивĕ нормăна мар, вăтам стахановец тухăçлăхне илеççĕ. Цикл графикĕпе кашни звенона паракан задани нормăран чылай пысăк. Ку таранччен мастер участокĕнче хатĕрленĕ йывăçа тракторсемпе вĕсем пултарнă таран кăна турттарса тухнă, ытти вăрмантах юлнă, ăна тепĕр кунсенче турттарнă. Халĕ апла мар: электропăчкăпа йывăç касакансем хатĕрленĕ йывăçа мастер участокĕн пĕтĕмпех илсе тухса вагон çине тиесе ямалла. Ку вăл—мастер участокне пĕр талăка паракан задани—цикл никĕсĕ пулса тăрать.

Графикпе мĕнле пурнăçланине, производствăри тĕп операцисем мĕнле пулса пынине старши мастер уйрăм схемăпа шута илсе пырать. Унта мĕн чухлĕ ĕç тунине пĕрлех, миçе çын, миçе машина, миçе механизм ĕçленине те палăртаççĕ. Çапла тунн смена вăхăтĕнче графикпе мĕнле пурнăçласа пынине пĕлсе тăма, çитменлĕхсене çийĕнчех асăрхаса хăвăрт пĕтерме май парать.

Графике пурнăçласси тикĕс пытăр тесе, урăхла каласан, ĕç татти-сыпписĕр, пĕр чăрăнмасăр пытăр тесе, кунта запасра механизмсем тытатпăр. Çапла, кунта пĕр электростанци, пĕр трактор, электропăчкă лентисем пур.

Вагонсем çине тиессине хăвăртлатас тесе, тиемелли площадкăри трос кăкармалли стреласене ик енчен тиеме май памалла лартрăмăр. Тракторсем йывăççене вагон икĕ енне пăрахса хăвараççĕ, лебедчиксем пĕр енчи йывăçа тиесе пĕтерсен, тепĕр енчен илме тытăнаççĕ. Кун пек тунн вагон çине тиессине чылай хăвăртлатма май пачĕ.

Цикл графикĕпе ĕçлеме тытăннă май, смена улшăнмалли вăхăтсене те çĕнĕлле йĕркелеме тиврĕ. Унччен иккĕмĕш смена пĕрремĕш смена хыççăнах ĕçе тытăнатчĕ. «Ĕçе тытăнать» тесен тĕрĕсех пулмасть; мĕншĕн тесен чугун çул работникĕсем тулли сцепсене илсе тухса пушă вагонсем лартиччен 2—3 сехет иртетчĕ. Çак вăхăта лебедчиксем, трактористсем, мотористсем ахалех тăрса ирттеретчĕç. Ку ситменлĕхсенчен хăтăлас тесе, иккĕмĕш сменăна ĕлĕкхи пек каçхине 7 сехетре мар, 9 сехетре ĕçе пуçăнмалла турăмăр. Капла смена вăхăчĕ пĕтĕмпех усăллă иртет.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерес енĕпе çÿлĕ пусăма çитрĕмĕр тесе калама пултараймастпăр-ха. Апла пулин те, ĕç калăпăшĕ кунти участокра 1,5 хут ÿсрĕ. Мастер участокĕ хăйĕн уйăхри заданине ирттерсе тултарчĕ. Кашни рабочи пуçне хатĕрлекен йывăç хисепĕ те ÿссе пырать. Механизмсемпе тата тухăçлăрах усă курма тытăнтăмăр.

Вăрманпромхоз 1953 çулхи плана декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 105.7 процент тултарчĕ. Çулталăк планне ăнăçлă тултарма ĕçе çĕнĕ майпа йĕркелени нумай пулăшрĕ.

Цикл графикĕпе халĕ тин ĕçлеме тытăннă май, кĕтмен чăрмавсемпе ситменлĕхсем нумай сиксе тухрĕç. Ку чăрмавсенчен ытларахăшĕ «Чувашлес» трестĕнчен килеççĕ. Сăмахран, запаслă пайсем пулман пирки трактор паркне кирлĕ пек хатĕрлесе çитереймерĕмĕр.

Уйăх пуçне, каçхи смена вырăнне çутатма 20 прожектор, кабель е провод кирлĕ. Халĕ электростанцисем ĕлĕкхи пек вырăнтан вырăна куçмаççĕ. Çавна май электропăчкăсем патне каякан кабеле тата 1.500 метр тăршшĕ тăсмалла. Электропăчкăсем яланах татти-сыпписĕр ĕçлетчĕр тесен, моторист аллинче яланах синкĕчлетнĕ пĕр-икĕ лента пулмалла. Ун пек тăвас тесен, пирĕн вăрманпромхоза тата 25 лента кирлĕ.

Цикл графикĕпе ĕçлесси—çĕнĕ те питĕ усăллă меслет. Вăл рабочисен сахал йышĕпех йывăç ытларах касса кăларма май парать. 1954 çулта эпир пĕтĕм вăрманпромхозĕпе çĕнĕ меслетпе ĕçлемелле тума палăртрăмăр. Çавна ăнăçлă пурнăçлас тесен, пирĕн вăрманпромхоза механизмсемпе машинăсем тата ытти оборудовани парса пулăшассине вăйлатмалла. Çапла, сăмахран, пур мастер участокĕсене те çĕнĕлле ĕçлеттермелле тăвас пулсан, тиемелли площадкăсене йĕркене кĕртме 40 таран блок кирлĕ. Рабочисене ĕç вырăнне вăхăтра çитерме тата илсе тухма тата 10 вагон хушса памалла. Уйăх пуçне 4 мотовоз, 6 дрезина кирлĕ пулать. КТ-12 тракторсем хăвачĕ çителĕксĕр, йывăр груз турттарса тухнă чухне час-часах çĕмĕрлеççĕ. Пысăк юман кĕрешсене илсе тухма С-80 йышши пĕр трактор кирлĕ. «Чувашлес» трест пире тивĕçлĕ пулăшу парасса шанса тăратпăр.

И. КНЯЗЕВ, вăрманпромхозри главнăй инженер.

Йывăç ытларах тиесе ярассишĕн

Пирĕн площадкăна икĕ тракторпа йывăç турттарса тăраççĕ. Цикл графикĕпе паракан задани тăрăх, лебедчиксен çак тракторсем илсе тухакан 92 кубометр йывăçа тиесе ямалла.

Ĕçе çăмăллатас тесе, 153-мĕш кварталти участокра тиемелли площадкăсене çĕнĕлле, сцепсем çине икĕ енчен тиемелле турăмăр. Кун пек чухне трасса икĕ енĕпе йывăç касса турттараççĕ. Тракторсем халĕ вагон икĕ енне йывăç пырса тăкаççĕ. Черечĕпе икĕ енчен илсе тиенĕ май, тракторсем валли яланах пушă вырăн пулать, тиемелли площадкăра пĕренесем çителĕклĕ пулаççĕ. Çавăнпа халĕ, иртнĕ уйăхсенчи пек, тракторсем йывăç илсе тухасса кĕтсе тăмастпăр, пушă вагонсем çителĕклĕ пулсан, сменăри заданине ирттерсе тултаратпăр.

Çĕнĕ ĕçе вĕренсе çитме çăмăл мар. Икĕ енчен тиемелле тунипе чокеровщиксем малтан килĕшсех каймарĕç, мĕншĕн тесен троса куçарма тата йывăç патне туртса илме йывăртарах. Троса туртса илме икĕ стрелана çыхăнтаракканни те йывăрлатать. Анчах ку хăнăхиччен кăна иккен. Манпа пĕрле ĕçлекен А. Горшковпа А. Гришанькин чокеровщиксем ĕçе часах хăнăхса çитрĕç. Халĕ пушă сцепа пĕр сехет хушшинче тиесе пĕтеретпĕр.

Пирĕн ĕç тухăçлăхĕ куллен кунах ÿссе пырать. Малтанхи кунсенче кунне 2—3 сцеп (40—60 кубометр) кăна тиесе яраттăмăр. Халĕ цикл графикĕпе паракан задание ирттерсе тултарма тытăнтăмăр. Çапла, декабрĕн 18-мĕшĕнче 92 кубометр тиесе задание ăнăçлă пурнăçларăмăр. Декабрĕн 22-мĕшĕнче 5 сцеп — 100 кубометр ытла тиесе ятăмăр.

Цикл графикĕ лебедчиксен ĕç тухăçлăхне тата ытларах ÿстерме май парать. Анчах пире чугун çул работникĕсем пушă сцепсем вăхăтра парса тăманни тытса тăрать. Вăрманпромхоз директорĕн приказĕ тăрăх, кунта комплексла поток бригадине пулăшас майпа, урăхла каласан, тулли вагонсене илсе тухса пушă

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лебедчик Н. В. Солдатов ĕçре.

сцепсем илсе пыма яланах пĕр паравуç пулмалла. Сурски ансăр чугун çул руководителĕсем ку приказа пăхăнсах каймаççĕ. Паравус пулман кунсенче тулли вагонсене лебедкăпа тата тракторсемпе куçарса пĕрер сехет иртет. Ку вăхăтра эпир пĕр сцеп тиесе лартнă пулăттăмăр.

Вагонсем çине тиеме цикл графикĕпе паракан задание ирттерсе тултарма май пултăр тесен, чугун çул работникĕсен ĕçне лайăхлатмалла, вĕсен ответлăхне ÿстермелле.

Н. СОЛДАТОВ, лебедчик.

Эпир ĕçе мĕнле йĕркелерĕмĕр

Цикл графикĕпе ĕçленĕ чухне тĕп производствăри рабочисем пĕр комплексла бригадăна пĕрлешсе тăраççĕ. Манăн бригадăра пурĕ 24 çын ĕçлет.

Ĕçе тытăниччен пире смена мастерĕ задани парать, технологилле картăпа паллаштарать. Технологилле карта тăрăх палăртнă участока касма хăш лентиничен тытăнмаллине кăтартать.

Эпĕ малтанах моторист пултăм. Калас пулать, ку ĕçе лайăхах вĕренсе çитрĕм. Цикл графикĕпе усă курни тухăçлăха нумай ÿстерме май пачĕ. Ĕлĕкрех турат иртекенсем ĕлкĕрейместчĕç. Çапла вара эпир пĕр-пĕрне тытса тăраттăмăр. Халĕ моторист хăйне уйăрса панă лентăра хăйĕн помощникĕпе кăна ĕçлет. Йывăççене вăл пĕр майлă ÿкерет. Ку турат иртекенсене те, трактористсене те çырлахтарать. Пĕр лентăна касса пĕтернĕ хыççăн, моторист тепĕр лента çине куçать. Ун вырăнне вара турат иртекенсем йышăнаççĕ. Вĕсем ĕç пĕтерсе тепĕр лента çине куçаççĕ, кунта вара трактор çитет. Çапла вара, кашни звено смена вăхăтĕнче мĕн чухлĕ ĕç тумаллине пĕлсе тăрать. Вăл задание пурнăçласан, унăн норми мĕн чухлĕ пурнăçланнине, уншăн мĕн чухлĕ укçа тивессине пĕлет.

Халĕ социализмла ăмăртăва йĕркелеме ăна ертсе пыма питĕ лайăх. Эпир Гимранов юлташ ертсе пыракан бригадăпа ăмăртатпăр. Кашни смена пĕтсен тата цикл вĕçленнĕ хыççăн, пире вăл мастер ĕç опычĕпе паллаштарать, эпир вара хăш бригада мала тухнине пĕлетпĕр, ун çинчен хамăр рабочисене пĕлтеретпĕр. Кая юлакан звенона мала кăларма кирлĕ мерăсем йышăнатпăр. Бригадăсенчи мотористсемпе турат иртекенсем ĕлкĕрсе пыраççĕ. Вагон çине лебедкăпа йывăç тиекенсем те хăнăхсах пыраççĕ.

Пире тракторпа турттарса кăларасси тытса тăрать. Трактористсем машинăна хисеплеме хăнăхсах çитеймен-ха. Тĕрĕс мар тытнăран пирки трактор часах çĕмĕрлет. Пĕррехинче çакна курма тиврĕ. Площадка патне пынă чухне В. Елдыков тракторист унччен хăй хăварнă йывăç çине тракторпа кĕрсе кайрĕ. Йывăрлăха тÿсеймесĕр трактор гусеници татăлчĕ. Кунта никам та мар, тракторист хăех айăплă. Ку тĕлĕшрен М. Шагинов тракторист паха тĕслĕх кăтартать. Унăн опычĕ пысăк. Çак опытна хăйĕн помощникĕпе чокеровщике паллаштарма тăрăшать. Вăл сайра чухне трактор çине ларать. Кабинăна помощникне лартать те, хăй трактор умĕнче утса, помощникне трактора мĕнле тытса пымаллине, тиемелли площадкăна мĕнле кĕмелле кăтартса пырать. Йывăçа кăкарнă çĕрте вăл чокеровщикĕ йывăçа чокерпа кăларма вĕрентет. Халĕ вăл ыттисенчен ирттерсе йывăç кăларать.

Тракторпа йывăç кăларасси—чи ответлă ĕç. Çавăнпа эпир, бригадирсем, трактористсене тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттересшĕн нумай вăй хурса тăрăшатпăр.

А. ЧЕПУРНОВ, бригадир.

Цифрăсемпе фактсем

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ çултан-çул çĕнĕ машинăсемпе тата механизмсемпе пуянланать. Яланхи калрсен хисепĕ ÿсет. Çавна май йывăç касса хатĕрлес ĕçе 97 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухас ĕçе—64 процент, турттарса кăларас ĕçе—95,2 процент механизациленĕ.

* * *

Йывăç турттарса кăларма ятарласа вуншар километр тăршшĕ чугун çул хывнă, паравуссем, платформăсем туяннă. Касса йăвантарнă йывăççене турат-сенчен иртеççĕ те сыпăлламасăрах пĕрле çыхăнтарнă икĕ платформă çине (икĕ сцеп теççĕ) тиеççĕ. Çак йывăççене авантрах сиплатра [illegible] рабочисем механизмсемпе касса сыпăлаççĕ, ĕçе [illegible] материалсем нумай кăлараççĕ.

* * *

Норма тăрăх, вăрманпромхозăн 11 уйăх хушшинче кашни автомашина пурĕ 4,3 пин кубометр турттарса кăлармалла пулнă. Чăннипе 5,1 пин кубометр йывăç турттарса кăларнă, задание 119 процент тултарнă.

* * *

Йывăр ĕçе механизацилени, производствăна вăрманпромхоз çĕнĕ формăсемпе усă курни, социализмла ăмăртăва анлă сарни вăрманпромхоза çулталăкри плана срокчен тултарма, планран ирттерсе 10 пин кубометр йывăç [illegible] турттарса кăларма май панă. Çак çул вĕçлениччен вăл планран ирттерсе 20—21 пин кубометр йывăç турттарса кăларать.

* * *

Вăрманпромхозра усă курман резервсем те сахал мар. Вăл электростанцисемпе паравуссемпе тухăçлă ĕçлеттереймест, [illegible] рабочисем нормăна тултарса пыраймаççĕ. Çак ситменлĕхсене пĕтерсен, тата пур участоксене те цикл меслечĕпе ĕçлеме куçарсан, вăрманпромхоз çулталăк тухăçлăхне [illegible] пин кубометр йывăç турттарса кăларма [illegible].

* * *

1954 çулхи пурнăçа вăрманпромхоз [illegible] ĕçре те [illegible] рабочисен [illegible] [illegible] тума [illegible].

УКЕРЧĔКСЕМ ÇИНЧЕ: 1. Кашкăр вăрманĕнче КТ-12 тракторпа турттаракан тракторист В. А. Пимашин. Вăл кунне 45—50 кубометр йывăç турттарса кăларать. 2. Лебедкăпа вагонсем çине йывăç тиеççĕ. Г. ЗИНЬКОВ фотографийĕсем.

Румынири халăх советсен суйлавĕн результачĕсем

БУХАРЕСТ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хаçатсенче облаçсенчи, хуласенчи, районсенчи тата ялсенчи халăх совечĕсен суйлавĕн результачĕсене пичетлесе кăларнă. Суйлав 1953 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче пулса иртнĕ.

Халăх совечĕсене 135.220 депутат суйланă. Суйланнă депутатсенчен пурте халăх демократи фрончĕн кандидачĕсем пулса тăраççĕ. Депутатсен пĕтĕм хисепĕнчен—24,67 проценчĕ хĕрарăмсем, 42,95 проценчĕ — Румынири рабочисен партийĕн членĕсемпе кандидачĕсем, 57,5 проценчĕ—партире тăманнисем.

Болгари промышленноçĕ туна çитĕнÿсем

СОФИЯ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири промышленность 1953 çулта чылай пысăк çитĕнÿсем тунă.

Декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне çĕршыври 200 ытла предприяти çулталăкри производство планĕсене срокчен тултарнă. Вĕсен шутĕнче Георгий Димитров ячĕпе пăравуссем тăвакан тата вагонсем юсакан завод, Сталин ячĕпе тăракан хими комбиначĕ, «Руно» ятлă пир-авăр комбиначĕ, Вылко Червенков ячĕпе тăракан завод тата ытти пысăк предприятисем те пур.

Социализмла ăмăрту анлăн сарăлса кайнине пула, йывăр промышленность предприятийĕсенчи рабочисем кăçалхи 11 уйăх хушшинче, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 14,4 процент ытларах продукци туса кăларнă.

КИТАЙРИ ПИР-АВĂР ПРОМЫШЛЕННОÇНЕ МАЛАЛЛА АТАЛАНТАРМАЛЛИ ПЛАНСЕМ

ПЕКИН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн (1953—1957 çулсем) çулĕсенче Китайри пир-авăр промышленноçĕ продукци туса кăларассине 50 процент ÿстерет. Çавăн пекех çăм, пурçăн, йĕтĕн пир-авăрĕ тата джут туса кăларасси ÿсет.

Çĕртавар хатĕрлекен вырăнсемпе ялсенчи рыноксен çывăхĕнче çип арлакан тата пир-авăр тĕртекен фабрикăсем нумай туса лартаççĕ.

Çав ĕçсене хресченсемпе хулари ĕçсыннисем пир-авăр таварĕсене ытларах ыйтнине тивĕçтерес шутпа тăваççĕ.

ВЕНГРИРИ ĔÇСЫННИСЕН ПРОИЗВОДСТВĂРИ ÇИТĔНĔВĔСЕМ

БУДАПЕШТ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕршыври предприятисем çулталăкри производство планĕсене срокчен тултарни çинчен Венгрири хаçатсем кашни кунах пĕлтерсе тăраççĕ.

Декабрĕн 21-мĕшĕнче Андраш-Печски çĕр кăмрăк районĕнчи шахта 1953 çулхи производство планне тултарнă. Шахта коллективĕ çулталăк вĕçлениччен планран ирттерсе 6 пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларма обязательство илнĕ. Çĕршыври сахăр туса кăларакан 5 завод çулталăкри планĕсене тултарнă. Çак заводсенчи рабочисем çулталăк вĕçлениччен планран ирттерсе нумай сахăр туса кăларма пулнă.

Çĕршыври ытти чылай предприятисем те çулталăкри плана срокчен тултарнă.

Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетессине хирĕç

ПАРИЖ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Францире Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарнине, Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене çирĕплетме хатĕрленнине хирĕç протестлесси ÿссе пырать.

«Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Леон хулинче нумай çынлă пуху пулса иртнĕ. Пухăва Германи милитаризмĕ тепĕр хут çĕкленнине хирĕç кĕрешес тĕллевпе ирттернĕ. Пухура Леон хулинчи мэр помощникĕ Вьенней тухса каланă. Тÿрĕ кăмăллă пĕр француз та Бонра тата Парижра тунă договорсене ырлама пултараймасть, тенĕ вăл. Вьенней Франци Совет Союзĕпе çыхăнса ĕçлемелли политика тытса пыма кирлине кăтартса панă. Пухура пĕр шухăш-кăмăллă пулса икĕ резолюци йышăннă. Резолюцисенче Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене сивлеснĕ, Индо-Китайра мирлĕ калаçусем пуçлама требовани лартнă.

Ош хулинче Жер департаментĕнчи мэрсен ассоциацийĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Мэрсен ассоциацийĕ пĕр кăмăллă пулса «Европăри юхăм» текенскерĕн харти проектне ырлама килĕшмен. «Европăри юхăмă», «Европа çарĕ» майлă тăракансене пĕрлештерес шутпа тăвасшăн.

Руссийон хулинче (Изер департаменчĕ) обществăлла тата политикăлла деятельсен ушкăнĕ, вăл шутра темиçе мэр-социалист, генеральнăй советник, католиксен профсоюзсен членĕсем ĕçсыннисене Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене çирĕплетессине хирĕç тăма чĕнсе каланă.

Францири хресченсем правительство политикине хирĕç протестлеççĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Францири хресченсен анлă массисем правительство политикине кăмăлсăр пулни ÿссех пырать. Правительство политики, уйрăммăн илсен, ялхуçалăхне те начарлатмалли çул-йĕр тытса пырать.

«Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Алье департаментĕнчи хресченсем, правительство политикине хирĕç протестленине палăртса, ĕнер Виши хулине каякан çул çинче баррикадăсем тунă, çулпа çÿреме 2 сехет хушши чарса тăнă. «Республикăри хăрушсăрлăх отрячĕсем» çула баррикадăсенчен тасатма хăтланни ăнăçсăр пулнă. Тури Вьенна, Эндр, Шаранта, Брез тата ытти департаментсенчи çулсем çинче те баррикадăсем туса лартнă. Хăшпĕр вырăнсенче хресченсемпе «республикăри хăрушсăрлăх отрячĕсенчи» хуралçăсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ.

«Фран-тирер» хаçат çапла пĕлтерет: Лимож районĕнче 800 çынтан тăракан хурал отрячĕ, çар чаçĕсене иртсе çÿреме лайăхрах пултăр тесе, Парижпа Тулуза, Бюсьерпе Гере хулисем хушшинчи çулсене баррикадăсенчен тасатма хушнă. Икĕ пин хресчен çак отряда хирĕç тăнă.

Авиньон хулинче (Воклюз департаменчĕ) 2 пин хресчен, правительствăн хресченсене хирĕçле политикине протестлесе, демонстраци ирттернĕ.

Корейăри Хĕрлĕ Хĕрес Обществин комиссийĕн протоколĕ

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри центральнăй телеграф агентстви Корейăри Хĕрлĕ Хĕрес Обществин комиссийĕн протоколĕ çинчен пĕлтернĕ. Çав комисси Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлнĕ. Хĕçпăшаллă вăйсем Корея Халăх Çарĕн тыткăна лекнĕ боецĕсемпе офицерĕсем çинче медицина тĕлĕшпе сăнавсем тунă. Протокол çине Корейăри паллă врачсем, вăл шутра Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Наука академийĕн членĕн кандидачĕ Цой Ын Сек терапевт алă пуснă. Америка çарĕн госпиталĕсенче тыткăнри çар çыннисене тискеррĕн асаплантарнине кăтартса паракан фактсем документра нумай. Çак документа килĕсене таврăннă тыткăнри çар çыннисем (вĕсенчен нумайăшне хальхи вăхăтра сыватаççĕ), каласа панисем, çавăн пекех комисси алăнчи ытти сведенисем тăрăх туса хатĕрленĕ. Тискер ĕçсем çинчен каласа панă çынсем хушшинче Корейăн темиçе врачĕ пур. Тыткăнра пурăннă чухне вĕсене Америка госпиталĕсенче ĕçлеттернĕ.

Протоколта çапла каланă: Америкăн çар влаçĕсем, пĕтĕм тĕнчери правăн нормисене сĕмсĕррĕн пăсса, гуманноçăн принципĕсене нимĕн вырăнне хумасăр, Корея Халăх çарĕн тыткăнри çар çыннисемпе медицина сăнавĕсем тума анлăн усă курнă. Çавна пула тыткăнри нумай çынсем вилнĕ тата чăлах пулса юлнă. Çапла, Пусан хулинчи полевой госпитальре Америкăн врачĕсем Бонгнпе Канфильд тыткăнри сывă çынсене ирĕксĕрлесех хирурги операцийĕсем тунă. Çав операцисене тунă вăхăтра çар çыннисенчен 80 процентне яхăн вилнĕ. Çак госпитальрех Америкăн пĕр хирургĕ тыткăнри çар çыннисене сивĕпе асаплантарса сăнавлă ĕçсем тунă. Тăм илтернĕ хыççăн тыткăнри çар çыннисенчен нумайăшне аллисене каснă. Иккĕмĕш номерлĕ лагерь сумĕнчи 1.493-мĕш номерлĕ больницăра тыткăнри çар çыннисен юнĕ ăшне тиф вакцинине нумай янă. Çав вăхăтрах чăннипе чирлĕ вырттă çар çыннисене сыватас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Туберкулезпа, дизентерипе тата ытти чир-чĕрсемпе асапланакан çынсене хĕненĕ, вĕсене тÿсме çук йывăр условисенче усранă. Çавăн пирки вĕсем часах вилнĕ.

Корейăри Хĕрлĕ Хĕрес обществин комиссийĕн членĕсем пĕтĕм тĕнчери наука работникĕсемпе ырă кăмăллă мĕнпур çынсене этеме вĕлерме наукăпа усă курнине хирĕç протестлеме чĕнсе каланă.

ТЕГЕРАНРИ ЛАРУ-ТАРУ

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян Тегеранра листовкăсем нумай салатнă. Листовкăсенче Иранпа Англи хушшинче тепĕр хут дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пуçланине хирĕç протестленĕ.

Иран столицинче центрти проспектсенче митингсем пулса иртнĕ. Студентсем университетри занятисене пыман.

Пакистанпа США хушшинчи çар союзне хирĕç

КАРАЧИ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Пакистан таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Даккăрен (Хĕвелтухăç Пакистан) пĕлтернĕ тăрăх, столицăри тата провинцисенчи политикăлла тата обществăлла паллă деятельсем хаçатсенче пичетлесе кăларма заявлени панă. Унта вĕсем Пакистан правительствине вăл США-па çар союзĕ ан тутăр, тесе чĕнсе калаççĕ. Заявленире, уйрăммăн илсен, çапла каланă: «Пакистан правительстви США-па тунă çар союзĕ çине алă пусас пулсан, пирĕн çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕпе суверенитечĕшĕн пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Ун пек союз Пакистана хăрушă вăрçа кĕртсе ÿкерĕ, мирпе çĕршыв чечекленсе пырассине хăрушлăх умне кăларса тăратĕ. Унтан та ытларах, çак союз пирĕн çамрăк государствăн строительство çулĕ çинче пысăк чăрмавсем туса хурĕ».

ЧИЛИРИ ĔÇСЫННИСЕН ПУРНĂÇĔ НАЧАРЛАНСА ПЫРАТЬ

БУЭНОС-АЙРЕС, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Чилири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, кăçал Чилире тавар хакĕ уйрăммăнах хытă ÿсет тата ĕçсыннисен пурнăçĕ начарланса пырать. Çапла, финанс, экономикăпа суту-илÿ министрĕ депутатсен палатинче 1953 çул «хаксем ÿсе пынă çул» пулнине йышăннă. «Эль Сигло» хаçат, çавна кăтартса парать: 1953 çулта пĕр килограмм çĕрулми хакĕ 6 песоран 18 песона, сахăр хакĕ—8 песоран 20 песона, çăкăр—12 песоран 17 песона, чей хакĕ—129 песоран 222 песона çити ÿснĕ. Пĕр мăшăр ată-пушмак хакĕ вăтам шутпа 500 песоран 1.200 песо таран ÿснĕ.

Официальнăй сведенисем тăрăх, 1953 çулта Чилире таварсен хакĕ вăтам шутпа 60 процент ÿснĕ.

Çĕршывра ют çĕршыв монополийĕсем пуç пулса тăнă пирки тата Чилири ялхуçалăхĕнче паразитла феодалла система пулнă пирки ялхуçалăх продукчĕсем çитмеççĕ. Çавна пула çĕршывра инфляци пуçланнă, хаксем хăвăрт ÿсеççĕ, тесе паллă тăвать хаçат.

Чилири ĕçсыннисем ĕç укçине ÿстерессишĕн, таварсемпе куллен кирлĕ япаласен хакĕсене малалла ÿстерсе пыма чарассишĕн, ют çĕршывсен монополийĕсен пурлăхне национализацилессишĕн тата çĕр реформи ирттерессишĕн кĕрешеççĕ.

«ЕВРОПА ÇАРНЕ» ТĂВАССИНЕ ХИРĔÇ

ГААГА, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Де Ваархейд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Роттердамра пуху пулса иртнĕ. Пухура пулнисем «Европа çарне» тунине тата Германи милитаризмĕ тепĕр хут çĕкленнине хирĕç протестленĕ. Пухура Голландири мир Совечĕн секретарĕ Марк Баккер, Сам Хоудсмит писатель тата Ио ван Диггелен госпожа тухса каланă. Вĕсем ĕçсыннисене Германи милитаризмĕ тепĕр хут çĕкленнине хирĕç кĕрешекен наци конгресне хатĕрленес çĕре активлă хутшăнма чĕнсе каланă. Наци конгресне январĕн 17-мĕшĕнче Амстердамра ирттермелле.

Пуху, пĕр кăмăллă пулса, парламентăн пĕрремĕш палатине чĕнсе калани йышăннă. Унта пуху çавăн пек требовани лартнă: «Европа çарĕ» çинчен тăракан ыйту тăрăх январĕн 19-мĕшĕнче пренисем ирттерме палăртнине палатăн тепĕр вăхăта хăвармалла.

Пире парти ырлăх пачĕ

Музыки Сталинла премилауреачĕн Ф. Лукинăн. Сăвăхĕсем В. Урдашăн.

1. Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Уй-хирпе иртес пулсан,
Ылтăн çăлтăрлă, мухтавлă
Ĕç геройсене куран.

Хушса юрламалли:

Çилĕ вĕрĕ кассăн-кассăн,
Юрă юхĕ таврана.
Тăвансем, сума сусассăн,
Килсе курăр хăнана.

2. Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Хапхинчен кĕрес пулсан,
Чĕнтĕрленĕ, ярапаллă
Çĕнĕ çуртсене куран.
Хушса юрламалли.

3. Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Вăйăне тухас пулсан,
Ĕçри паттăр, пултаруллă
Çамрăк-кĕрĕме куран,
Хушса юрламалли.

4. Пире парти ырлăх пачĕ,
Тавтапуç чунтан ăна.
Эй, çĕклен, çĕршыв хăвачĕ,
Чыс, мухтав, çулпуç, сана!
Хушса юрламалли.

Республика тулашĕнчи чăвашсем патĕнче

„Канаш" колхозра

Пуян та культурăллă пурăнаççĕ Кĕçĕн Ибрей ялĕнчи (Куйбышев облаçĕ) «Канаш» колхозри колхозниксем.

Сулсеренех ÿсет, илемленет колхозлă Кĕçĕн Ибрей. Ял варринче çĕнĕ пысăк клуб. Ăна кăçал туса лартнă. Унта 200 çын вырнаçмалăх кино е постановкăсем курмалли зал, вуламалли зал, художествăлла пултарулăх кружокĕсем ĕçлемелли пÿлĕмсем пур. Электричество кĕртнĕ. Клубра кашни каçах халăх нумай пулать. Çамрăксем çеç мар, ваттисем те пыраççĕ унта. Кашни каçах мĕн те пулин пулать: кино, спектакль, лекци е доклад. Юлашки вăхăтра КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕ çинчен 8 лекци пулнă, вĕсене ялти лектори членĕсем вуланă.

Клубпа юнашарах библиотека. Унта çичĕ пин кĕнеке ытла. Вулакансен йышĕ 300 çынран иртет.

Библиотекăпа тĕлме тĕл вăтам шкул çурчĕ. Халĕ ялта çырăва пĕлмен çын çук. Вăтам шкулта колхозниксен ачисем 400 çын ытла вĕренеççĕ. Шкул директорĕ Дарья Павловна Макарова вăтам шкул уçнăранпах кунта ĕçлет. Ку шкулта ĕçлекен 29 учительтен 19-шĕ çак ялти çынсем.

Ялта вулав çурчĕ, медицина пункчĕ, почта уйрăмĕ, магазин тата ытти учрежденисем пур.

Ялăн сарлака та хитре урамĕсем çине пăхсан чун савăнать. Урам икĕ айккипе колхозниксен илемлĕ те пысăк пÿрчĕсем лараççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче кунта 30 колхозник çемйи çĕнĕ пÿртсем туса кĕчĕç. Акă колхоз конюхне Назейкина илер. Октябрьти революци пуличчен вăл татăк çăкăршăн пуянсем патĕнче тарçăра ĕçлесе çÿренĕ. Халĕ вăл пуян та культурăллă пурăнать, çак çулсенче тимĕр витнĕ пÿрт туса кĕчĕ.

Ялта тимĕр, шифер витнĕ пÿртсем темĕн чухлех. Кашни пÿртрех электричество тата радио. Электричество вăйĕпе колхоз производствинче анлăн усă кураççĕ. Колхоз арманĕ, тимĕрçĕ лаççи, столярнăй мастерской, çăм чавакан мастерской электричество вăйĕпе ĕçлеççĕ. Акă çапас, ытем çинче тырă тасатас ĕçре те электричество вăйĕне анлăн усă кураççĕ. Электричествăпа выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсене механизацилене.

Колхозра килсеренех велосипед, патефон, çĕвĕ çĕлемелли машина, пĕчĕк библиотекăсем пур. Колхоз утарçи А. Мунишкин юлташ темиçе çул каярах çăмăл автомобиль—«Москвич» туянчĕ. Колхоз тимĕрçи Георгий Дмитриев, колхоз платникĕ Максим Артюшкин тата колхозник Николай Пидеркин мотоциклетсем туянчĕç.

Колхозлă ялăн хăйĕн интеллигенцийĕ ÿссе çитĕнчĕ. Кĕçĕн Ибрей ялĕ тăван çĕршыва 1 инженер, 26 учитель, партипе совет работникĕсем 21 çын, 8 шофер, 10 тракторист, 15 комбайнер, 5 агроном, 4 зоотехник пачĕ. Ял çыннисенчен чылайăшĕ Мускавра, Куйбышевра тата ытти хуласенче ĕçлеççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕпе хавхаланса, колхозниксем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ.

С. ДАНИЛОВ.

Эстони литературин никĕсне хывакан

(Ф. Р. Крейцвальд çуралнăранпа 150 çул тултарнă май)

Эстони халăхĕн демократилле литературин никĕсне хывакан, халăх творчествине тĕплĕн тĕпчесе сăнакан, обществăн малта пыракан сийĕн паллă деятелĕ Фридрих Рейнгольд Крейцвальд çуралнăранпа 150 çул çитрĕ.

Крейцвальд (1803—1882) крепостной сапожник çемйинче çуралнă. Вăл Эстони халăхĕшĕн йывăр вăхăтра пурăннă. Çав вăхăтра пĕтĕм политикăлла власть Прибалтикăри нимĕç улпучĕсем аллинче тăнă. Вĕсем хресченсене калама çук хытă эксплуатацилене. Çакна тума вĕсене патша правительстви пулăшса пынă.

Писатель хăйĕн тăван халăхĕ мĕн тери чухăн пурăннине, мĕн тери асапланнине çамрăк чухнех лайăх курнă. Вăл Эстонири крепостной йĕркен тĕрекне—мызăна тата чиркĕве пĕтĕм чунтан курайман. Анчах та Крейцвальд вырăссен революцилле демокрачĕсем патнех çитеймен. Кивĕ йĕркесене революци туса аркатса пăрахма кирлине вăл таçăрса илеймен. Крепостной йĕрке халăх тĕттĕм пулнипе тытăнса тăрать, тесе шухăшланă вăл. Çавăнпа та вăл пĕтĕм вăйран халăха çутта кăларассишĕн тăрăшнă.

Крейцвальд вĕренĕвĕ чухне калама çук нумай йывăрлăхсем тÿснĕ пулнă. Нумай асап курнă хыççăн, вăл учитель тухнă, вара Петербург хулинче учитель пулса çулталăк çурă ĕçленĕ. 1826 çулта вăл Тартури университета, медицина факультетне вĕренме кĕнĕ. 1833 çулта çав университетран вĕренсе тухнă та Выр хулине пурăнма куçнă. Кунта вăл 44 çул хушши врач пулса ĕçленĕ. Крейцвальд 1882 çулта Тарту хулинче вилнĕ.

Крейцвальдăн чи паллă произведенийĕ вăл — «Калевипоэг». Çав произведенипе эстони халăх литературин пĕрремĕш чаплă эпосне произведенийĕ пулса тăрать. Çав эпос урлă эстони халăхĕн литература[illegible] ри пĕтĕм тĕнчипех паларнă. «Калевипоэга» халăх юмахĕсене, юррисене темиçе çул хушши пухса пырса, вĕсене якатса, урăхлатса çырнă. «Калевипоэгра» эстони халăхĕн йăли, шухăш-кăмăлĕ, историллĕ шăпи, ют çĕршывсен захватчикĕсене хирĕç темиçе ĕмĕр хушши пынă кĕрешĕвĕ курăнать. Унта эстсен авалхи обществăлла пурнăçĕн сăн-сăпатне сăнласа панисĕр пуçне, эстони халăхĕн ĕмĕрхи ĕмĕчĕсене те питĕ лайăх уçса кăтартса панă.

Калевипоэг хăй—халăх геройĕ. Халăхăн мĕнле лайăх енĕсем пур, çавсем пурте Калевипоэгра та пур. Вăл ĕçчен те хăюллă, ăслă та тÿрĕ кăмăллă. Вăл, пĕр хăраса тăмасăр, усал та хура вăйсене хирĕç тухать. Крейцвальд произведенийĕнче демократизм, крепостной йĕркесене чунтан курайманни палăрса тăрать. Унта çынсем çутçанталăка тĕпчесе пĕлессишĕн пулни, çĕр çинче ырă пурнăç тăвасшăн çунни курăнать. Унта эстони халăхĕпе вырăс халăхĕ хушшинче историллĕ çыхăну пулнине кăтартса панă. Эстонири обществăлла шухăшсене, эстони литературипе искусствине аталантарнă çĕрте «Калевипоэг» эпос питĕ пысăк вырăн йышăннă.

Паллах ĕнтĕ, реакционерсем çак малта пыракан шухăшлă произведение хапăлласа йышăнма пултарайман. Вĕсем ăна питĕ хытă критикленĕ е пĕр сăмах чĕнмесĕр ăна манăçа кăларма тăрăшнă. Çав вăхăтрах демократилле культура представителĕсем «Калевипоэга» питĕ ăшшăн йышăнаççĕ. Ăна пĕрремĕш хут пичетлесе кăларсан (1862 ç.) çийĕнчех сутса пĕтернĕ. Çакăн хыççăн «Калевипоэг» пĕтĕм тĕнчипе чапа тухать: ăна вырăсла, нимĕçле, латышла тата венгерла куçарса пичетлесе кăлараççĕ. Çав произведение уйрăм сыпăкĕсене украинла, финла, французла, италиянла тата ытти чĕлхесене[illegible] çынсе те куçарнă.

Крейцвальд халăх сăвви-юррисене пухас ĕçпе кăна çырлахман. Ун чухне эстони чĕлхипе сайра хутра кăна тухакан изданисенче вăл фольклор материалĕсене пуринчен малтан пичетлеме пуçланă. Вăл 30 çул хушши яхăн «Хресченсен усăллă календарьне» редакциленĕ. 1855 çулта çав календарьте вăл хăйĕн «Тĕксĕм вăхăт» ятлă калавне пичетлесе кăларнă. Крейцвальд çав калава çырнă чухне çĕр айне пытарса хунă мулсем çинчен халăх хушшинче çÿрекен юмахсемпе усă курнă. Çав çулах «Çынсем мĕншĕн хăйсене хăйсем ултала́ççĕ» ятлă статья пичетлесе тухать. Çав статьяра писатель тĕрлĕ тĕшмĕшсене, сиенлĕ йăласене хирĕç тухать, раснах чирлĕ çынсене юмăç пăхса, вĕрсе-сурса «сыватакан» юмăççене хытă критиклет.

1866 çулта, патша цензури çав тери чăрмантарса тăнине пăхмасăр, Крейцвальд «Эстони халăхĕн авалхи халапĕсем» ятлă пысăк сборник пичетлесе кăларать. Унта 43 халап, 18 легенда кĕнĕ. Çав материалсем чирĕве сивлеççĕ. Вĕсем питĕ хăвăрт чапа тухаççĕ. «Калевипоэгпа» «Халапсене» пичетлесе кăларни эстони халăхĕн нациллĕ литературин çуралнине пĕлтернĕ.

Ф. Р. Крейцвальд хăйĕн илемлĕ тата публицистикăлла произведенийĕсенче крепостной йĕркене хирĕç тухать. Эстонин реакцилле, клерикалла культурине, нимĕç баронĕсен шанчăклă тарçисене — протестантсен пупĕсене питлет.

Просветитель-демократ Крейцвальд халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатассишĕн ырми-канми кĕрешнĕ. Вăл наука йĕркевĕсене тĕрлĕ произведенисем çырнă. Çутçанталăкри, çĕр çинчи, пĕлĕт çинчи явленисем çинчен, чĕрчунсемпе ÿсентăрансем çинчен, наукăри тата техникăри çĕнĕ аталансем çинчен пĕтĕм халăх ăнланмалла çăлтепе кала-кала панă.

Çырнă чухне те, ытти çĕрте те писатель эстони халăхĕпе вырăс халăхĕн историлле туслăхĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăннине палăртнă. Вăл Эстони халăхĕ çапла вырăс халăхĕпе туслă пулсан кăна хăйĕн, ылтăна тупма пултарнипе пĕтĕм чунтан ĕненнĕ.

Вырăссемпе эстони халăхĕ хушшинчи культурăллă çыхăнăва çирĕплетес пымалла текен шухăша Крейцвальд пĕр вĕçĕмрен хÿтĕлесе çырнă. Халăх вырăс чĕлхипе вĕренмелли шкулсем уçасшăн пулнине писатель хĕрÿллĕн хÿтĕленĕ. Вăл: «вырăс чĕлхи пирĕн ачасене çăкăр-тăвар пекех кирлĕ»,— тенĕ.

Эстони халăхĕ помещиксемпе капиталистсен влаçне сирпĕтсе антарнă хыççăн, Крейцвальд çырса хăварнисем пĕтĕм халăх хушшине сарăлаççĕ, вĕсене пур çĕрте те ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Крейцвальд произведенийĕсене питĕ йышлăн пичетлесе кăларма пуçлаççĕ. Вăл çырнисене композиторсем кĕвĕлесе юрă тăваççĕ, çав юрăсене концертсенче тата литература каçĕсенче юрлаççĕ.

Крейцвальд çуралнăранпа 150 çул çитнĕ куна эстони халăхĕ питĕ чаплă уява палăртнă пек палăртать. Писатель мĕн çырнă, çавсене пĕтĕмпех пухса, пичетлесе кăлараççĕ. Кун пек пĕрлештерсе пичетлесе кăларни халиччен пулман-ха. Эстони ССР Наука академийĕн чĕлхепе литература институчĕ Крейцвальд творчестви çинчен çырнă статьясен пухăвне хатĕрлесе çитерчĕ. Писатель тĕрлĕ çынсем патне çырнă пур çырусене те пысăк кĕнеке туса пичетлесе кăларма хатĕрлеççĕ.

Совет Эстонийĕнчи ĕçсыннисем хăйсен пархатарлă ывăлне асра тытаççĕ, ăна пĕтĕм чунтан-вартан юратса «юрăсен ашшĕ», теççĕ. Республикăри чи чаплă композиторсем Крейцвальд произведенийĕсене кĕвĕлесе юрăсем çырнă. Республикăри чи паллă «Эстония» театр «Калевипоэг» ятлă балета лартать. Ун музыкине Сталинла премин лауреачĕ Э. Капп çырнă.

Крейцвальд çуралнăранпа 150 çул тултарни вăл—Совет Союзĕнчи тăванла халăхсен çемйинче хăватлăн чечекленекен совет эстони культурин пысăк праçникĕ.

Э. НИРК,
Эстони ССР Наука академийĕн Чĕлхепе литература институчĕн научнăй сотрудникĕ.

Инвалидсен çуртĕнче

ПЕРВОМАЙСКИ. Турханти инвалидсен çуртне Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, 1942 çулта уçнă. Унта халĕ пĕрремĕшпе иккĕмĕш группăри инвалидсем пурăнаççĕ. Вĕсене государство тумлантарать, тăрантарса усрать, вĕренме тата вăхăта культурăллă ирттерме условисем туса парать.

Инвалидсен çуртĕнче Пĕтĕм Союзри суккăрсен обществин пуçламăш организацийĕ пур. Организацире 30 член шутланать. Вĕсем çурта Брайль системи тăрăх хут вĕренеççĕ. Çамрăк инвалидсем хăйсен пĕлĕвне малалла та ÿстерсе пыма тăрăшаççĕ. Акă Анатолий Гельмутдинов Турханти вăтам шкулта X-мĕш класра, Н. Молостовкин VII-мĕш класра вĕренеççĕ. Кунта КПСС райкомĕ парти историне вĕренмелли кружок организациленĕ. Ильин, Юргаев, Леонтьева, Скворцов юлташсен кружокра тăрăшса вĕренеççĕ.

Кунта художествăлла пултарулăх кружокĕсене ĕçлеме те лайăх условисем туса панă. 4 хут купăс, балалайкăсем, сĕрме купăссем тата гитарăсем пур. Художествăлла пултарулăх кружокĕн членĕсем хăйсен патĕнче çеç мар, Турхан ялĕнчи ĕçсыннисем валли те концертсем параççĕ.

А. ТУМАНОВ.

[illegible] ТАВАÇÇĔ

[illegible] çĕнĕ [illegible] тыттăмĕç. Вăл, [illegible] чылай пысăк пулать.

А. ТИМОФЕЕВ.

Радио итлекенсен конференцийĕ

ВАРНАР. Районти Культура çуртĕнче радио итлекенсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта 300 çын ытла пучĕ.

Конференцире пулнисем Чăваш радиовещанийĕн тата районти радиоузелăн ĕçĕсем çинчен отчетсем итлерĕç. Сÿтсе явнă ыйту тăрăх чылай юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем радио тăрăх паракан передачăсене лайăхлатма пахă сĕнÿсем пачĕç.

П. ТИХОНОВ.

ТÿРЛЕТНИ

«Коммунизм ялавĕн» декабрĕн 22-мĕшĕнче тухнă номерĕнче пĕрремĕш страницăра (виççĕмĕш колонка, иккĕмĕш абзаци саккăрмĕш йĕркене) çапла тÿрлетсе вуламалла: «Атомлă тата водородлă хĕçпăшалсемпе усă курас хăрушлăха сирсе ярас тĕлĕшпе те...». Малалла пичетленсе тухнă пекех.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 26-мĕшĕнче «[illegible]» спектакль «Юратни хĕр».

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — декабрĕн 26-мĕшĕнче «Красный галстук».

Спектакльсем 12 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА» — декабрĕн 26-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеансенче «Звезды в горах», ытти сеансенче—«[illegible]».

«УДАРНИК» — декабрĕн 26-мĕшĕнче «Завтрак у предводителя».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—6-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-28, секретариат—5-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-87, парти пурнăçĕ пайĕ—5-50, общество пайĕ—6-64, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—5-97, культура пайĕ—6-61, совет строительстви пайĕ—6-64, çырусен пайĕ—7-32, кăларăмсене контурĕ—6-33.

НТ 60933 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 3057. Тираж 25.300 экз.